Çĕмĕрлери обществăпа политика хаçачĕ

# Малалла

2010
ноябрĕн
26-мĕшĕ
ЭРНЕКУН

№ 177-180
(10582-10585)

Сутмалли хакĕ ирĕклĕ.

1935 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

www.VPERED21.ru

# Анне...

*Ноябрĕн 28-мĕшĕ – Аннесен кунĕ*

## Кашнин шăпинчи тĕп сăмах

**Аннесен кунне туса хума Патшалăх Думин Хĕрарăмсен, çемье тата çамрăксен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕ сĕннĕ. Ку уяв – ĕмĕрлĕх уяв.**

**Ăруран ăрăва анне – кашни çыншăнах пурнăçри тĕп çын.**

**Аннесене мĕн чухлĕ лайăх, ырă сăмахсем каласан та, çакăн валли темле сăлтав шыраса тупсан та, вĕсем ытлашши пулмĕç!**

**Çак кун ачисене юрату, ырлăх, çепĕçлĕхпе ачашлăх парнелекен мĕн пур Аннесене çак кун тав тумалла.**



***Хаклă хĕрарăмсем, пирĕн çепĕç аннесемпе асаннесем!***
***Сире пĕтĕм чĕререн уяв ячĕпе – Аннесен кунĕпе саламлатăп!***

Ку уяв пирĕншĕн кашнийĕншĕнех хаклă. Эпир чи çывăх çыннăмăрсем – аннесем умĕнче парăмлă. Эсир пире пурнăç парнеленĕ, таврари тĕнчене шанма, пире пурне те юратаççĕ тесе ĕненӳллĕ пулма вĕрентнĕ. Пĕчĕк çынна пурнăç парнелесси, ăна пăхса ӳстересси, инкексенчен сыхласси, тепĕр чухне ачисен телейĕшĕн шар курасси – хĕрарăмсен сăваплă тивĕçĕ.

Çамрăк амăшĕсене, тăлăх ачасене усрава илнĕ хĕрарăмсене, нумай ачаллă амăшĕсене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Паян федераллă тата республика влаçĕсем сире ачасене пăхса ӳстерме çăмăлрах пултăр тесе нумай тăваççĕ. Анчах амăшĕшĕн чи лайăх парне – хăйсен ачисемпе хутшăннин савнăçĕ. Атьăр-ха аннесене юратни çинчен ытларах калаçар, вĕсен пурнăçне çăмăлрах, çутăрах тата лăпкăрах тума тăрăшар.

Çĕмĕрле хулинче пурăнакан, амăшĕн савăнăç туйăмне курнă мĕн пур хĕрарăмсене уяв ячĕпе саламлатăп! Сире яланах юратчĕр, телейлĕ туйччĕр. Сирĕн ачăрсем сывă та тĕреклĕ, ăслă пулса ӳсчĕр, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илччĕр, ватлăхра сирĕншĕн тăрăшчĕр, мĕншĕн тесен амăшĕн телейĕ – ачисенче.

**Çĕмĕрле хула администрацийĕн пуçлăхĕ**
**А.Ю. БРОНИЦЫН.**

**Хаклă та ырă аннесем!**

**Çĕмĕрле районĕн администрацийĕ сире Аннесен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлать!**

Кашни çыншăнах çĕр çинче аннерен çывăхрах, хаклăрах çын çук. Анчах пурнăçри хĕвĕшӳре эпир пур чухне те аннесене юратни çинчен калама, хамăрăн савăнăçсемпе пăшăрханусем çинчен пĕлтерме, ахаль шăнкăравласа пĕлме пултараймастпăр. Атьăр-ха çак çутă кун хамăра пурнăç парнеленĕ, эпир юратакан çынсене аса илер!

Тайма пуç сире, пирĕн хаклă аннемĕрсем! Çирĕп сывлăх, телей, тӳсĕмлĕх пултăр!

**Çĕмĕрле район**
**администрацийĕн пуçлăхĕ**
**В.А. МУРАШКИН.**

## Çĕмĕрлесем спорт фестивальне хутшăнĕç

Пĕтĕм тĕнчери инвалидсен кунĕн шайĕнче Çĕмĕрле районĕнче пур ĕçе те хăйсем тума пултарайман çынсем валли тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ.

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче Саланчăк поселокĕнче инвалид-ачасем хушшинче районти ăмăртусем иртрĕç. Хĕрачасемпе арçын ачасем спортăн 4 тĕсĕнче ăмăртрĕç: дартс, çăмăл атлетика, сĕтел çинчи теннис, шашка.

Инвалид-ачасем хушшинчи районти ăмăртура Ирина Чернова, Диана Николаева, Виталий Ильин, Максим Жигулев, Вадим Васильев çĕнтерчĕç. Вĕсем пур ĕçе те хăйсем тума пултарайман çынсене халалланă республикăри 12-мĕш спорт фестивальне хутшăнĕç. Спорт фестивалĕ Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕн 3-мĕш номерлĕ ятарлă ачасемпе çамрăксен шкулĕн спорт комплексĕнче иртет. Вĕсем çавăн пекех район администрацийĕн пуçлăхĕпе, влаç органĕсен, обществăлла организацисен представителĕсемпе тĕл пулĕç.

**Л. САЕРОВА.**

*Шахмат*

## Президент Кубокĕшĕн

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарта «ЮНИТЭКС» центрта шахмат енĕпе иртекен республикăри ăмăртусен финалĕ иртрĕ. Çак ăмăртусем шкул ачисен Чăваш Республикин Президенчĕн Кубокĕшĕн кĕрешмелли 13-мĕш Спартакиади шучĕпе пулчĕç.

Ăмăртăва зонăри ăмăртусен 2-мĕш тапхăрĕнче мала тухнă Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар, Çĕмĕрле, Элĕк, Канаш, Елчĕк районĕсен командисем хутшăнчĕç. Çĕмĕрле хулин командинче Ачасен пултарулăх çурчĕн «Дебют» секцийĕн воспитанникĕсем пулчĕç, 4-мĕш вырăн йышăнчĕç.

Çак турнира хатĕрленнĕ май команда чылай вăйланчĕ. А. Ватолин Çĕнĕ Шупашкар командин лидерне çĕнтерме пултарчĕ, запасра тăракан С. Яндаковпа Д. Савельев 4 партире 3-шер очко пухрĕç. Çакă вĕсене малаллахи ăмăртусенче те усă кӳрĕ.

**В. МЯСНИКОВ,**
Ачасен пултарулăх çурчĕн «Дебют» секцийĕн ертӳçи.

## Бизнеспа влаç канашлаççĕ

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкарта бизнеспа влаç пĕрле хутшăнса ĕçлессин ыйтăвĕсене халалланă Пĕрлехи йышăну кунĕ иртет. Мероприятие йĕркелекенĕсем Раççейри Юристсен ассоциацийĕн Чăваш Енри регионти уйрăмĕ, республика прокуратури тата Суту-илӳ палати.

Çак кун республикăн суту-илӳ палатинче Чăваш Республикин прокуратурин, патшалăх тата муниципалитет контролĕн, влаç органĕсен представителĕсем ĕçлеççĕ. Специалистсем предпринимательсем контрольпе надзор органĕсемпе çыхăнса ĕçлессин, бизнес прависене хӳтĕлессин ыйтăвĕсемпе, прокуратурăн çак сферăри полномочийĕсемпе, планпа палăртман тĕрĕслевсем ирттерессин практикипе çыхăннă ыйтусене хуравлĕç.

**Cap.ru**

**«МАЛАЛЛА» хаçатăн чăвашла кăларăмне çырăнса илĕр!**

**Паянхи номерте:**

**ТВ ПРОГРАММА**

Хулапа районта администрацисен пуçлăхĕсене уйăрса лартнă. Çивĕч интервьюсем. — 2-3 стр.

Район пĕлтерĕшлĕ ЧП.




Çĕрпӳ район администрацийĕн пуçлăхне суя дипломшăн судпа айăпланă. — 5 стр.

Çĕмĕрле ялĕнчи шкул 115 çул тултарчĕ.
Чиркӳ прихучĕн шкулĕнчен вăтам шкул таран. — 6-11 стр.

Эсĕ поэт пулмасан та, гражданин пулма тивĕç...



Çĕмĕрлери 8-мĕш гимнази республикăри волонтерсене пĕрлештерчĕ: ноябрĕн 12-мĕшĕнче кунта иртнĕ семинар-практикумра çамрăксене гражданла воспитани памалли меслетсене сӳтсе яврĕç. — 12 стр.

"Больница хучĕ": мĕнле шутламалла тата мĕн чухлĕ тӳлемелле? — 13 стр.

Çынсен кĕсйинчен – патшалăх кĕсйине. Çĕнĕ çултан алкоголь, бензин тата табак хакланать — 14 стр.

*"Хола çоч" хулаш мĕнле пулнă? Вĕçĕ.*
Çĕмĕрлесен "пылак" чирĕ: сахăр диабечĕпе чирлекен палăртнă 1 çын пуçне чирлине чухламан 4-5 çын шутланать. — 15 стр.

## РЕШЕНИЕ

**Собрания депутатов г. Шумерли Чувашской Республики**

от 19.11.2010 г. № 15 г. Шумерля

**О результатах конкурса на замещение должности главы администрации города Шумерли Чувашской Республики**

В соответствии с Федеральным законом Российской Федерации от 6 октября 2003 г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации деятельности местного самоуправления в Российской Федерации», Федеральным законом Российской Федерации от 2 марта 2007 г. № 25-ФЗ «О муниципальной службе в Российской Федерации», Законом Чувашской Республики от 18 октября 2004 г. № 19 «Об организации местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом города Шумерли и Положением о порядке проведения конкурса на замещение должности главы администрации города Шумерли Собрание депутатов города Шумерли **решило:**

1. Согласиться с решением комиссии по проведению конкурса на замещение должности главы администрации города Шумерли Чувашской Республики о признании победителем конкурса **Броницына Андрея Юрьевича**.
2. Назначить Броницына Андрея Юрьевича главой администрации города Шумерля Чувашской Республики до окончания срока полномочий депутатов Собрания депутатов города Шумерля созыва 2010-2015 годов.
3. Предложить главе города Шумерли – председателю Собрания депутатов города Шумерли Яргунину Сергею Валерьевичу заключить контракт с Броницыным Андреем Юрьевичем, главой администрации города Шумерли Чувашской Республики до окончания срока полномочий депутатов Собрания депутатов города Шумерли созыва 2010-2015 годов.
4. Настоящее решение вступает в силу с момента его подписания и подлежит официальному опубликованию в местных средствах массовой информации.

**Глава города Шумерли С.В. ЯРГУНИН.**

## РЕШЕНИЕ

**Собрания депутатов Шумерлинского района Чувашской Республики**

от 19.11.2010 г. № 3/1 г. Шумерля

**Об итогах конкурса на замещение должности главы администрации Шумерлинского района Чувашской Республики**

В соответствии с Федеральным законом от 6.10.2003 г. № 131-ФЗ "Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации", Законом Чувашской Республики от 18.10.2004 г. № 19 "Об организации местного самоуправления в Чувашской Республике", Уставом Шумерлинского района, Положением о порядке проведения конкурса на замещение должности главы администрации Шумерлинского района, утвержденным решением Собрания депутатов Шумерлинского района от 25.04.2008 г. № 29/3 (с изм. от 26.03.2010 г. № 52/4) Собрание депутатов Шумерлинского района Чувашской Республики **решило:**

1. Согласиться с решением комиссии по проведению конкурса на замещение должности главы администрации Шумерлинского района Чувашской Республики о признании победителем конкурса **Мурашкина Владимира Алексеевича**.
2. Назначить Мурашкина Владимира Алексеевича главой администрации Шумерлинского района Чувашской Республики с 19 ноября 2010 года на срок до дня окончания полномочий Собрания депутатов Шумерлинского района Чувашской Республики V созыва.
3. Опубликовать настоящее решение в общественно-политической газете «Вперед» и издании «Вестник Шумерлинского района».
4. Настоящее решение вступает в силу с момента его подписания.

**Глава Шумерлинского района А.П. ИЛЬГАЧЕВ.**

*Çивĕч интервью*

# А.Ю. Броницын: «Хулана пурнăç вĕрсе кĕртмелле!»

**Ахăртнех, Çĕмĕрле историйĕнче хула влаçĕн пуçĕнче айккинчен килнĕ çын тăни пĕрремĕш хут. Пирĕн пĕчĕк хула проблемисене пĕлетши вăл? Вĕсене татса парас тесе вăл мĕн кирлине пурне те тăвĕ тесе шанма пулать-ши? Çак ыйтусем паян тăван хула шăпишĕн пăшăрханакан кашни хула çыннине шутлаттараççĕ. Çавăнпа Çĕмĕрле хула администрацийĕн çĕнĕ пуçлăхĕпе А.Ю. БРОНИЦЫНпа калаçăва шăпах çак ыйтусенчен пуçларăмăр.**



– "Айккинчен килнĕ çын" тесе каланипе килĕшес килмест. Эпĕ хама ют çын тесе шутламастăп. Мĕншĕн тесен Чăваш Енре çуралнă. Ку вăл ман Тăван çĕршыв, вăл маншăн çывăх. Кунти кашни чул паллă тата хаклă теме пулать... Чăваш Ене эпĕ темĕнле уйрăм муниципалитет пĕрлĕхĕсем çине пайлама пултараймастăп, республикăн кашни кĕтесĕ – тăван. Унтан та ытларах, Çĕмĕрлере эпĕ вуншар хут пулнă. РФ Патшалăх Думин депутачĕ пулнă чухне те, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулнă чухне те, хамăн суйлав кампанийĕсем вăхăтĕнче те. Ĕненĕр, Çĕмĕрле проблемисем маншăн çывăх, мана та пăшăрхантараççĕ.

Айккинчен килнĕ çын çĕнĕлле пăхать, ытларах усă кӳме пултарать тесе шутлатăп. Çакăн пек калама манăн сăлтавсем пур. Мускаври политика тишкерĕвĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер, эпĕ Европăри нумай çĕршыври муниципалитет пĕрлĕхĕсенче практикăллă семинарсенче пулнă. РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думинче эпĕ вырăнти управлени комитетĕнче пулнă. Хулана йывăр ларутăруран кăлармашкăн кирлĕ практикăллă пĕлӳсем пур.

**– Андрей Юрьевич, Эсир чăнах та палăртнă улшăнусем пурнăçа кĕрессе шанатăр-и?**

– Ман шутпа, çăмăл хуласем пулмаççĕ. Кашни хуланах хăйĕн проблемисем. Пирĕн хулари пур проблемăсене те татса пама пулать тесе шутлатăп. Чи малтан ку Çĕмĕрлешĕн чи йывăр ыйтăва – çупт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха пырса тивет. Нумай çулхи парăмсен шăтăкĕнчен тухмалли çулсене палăртнă. Сире шантаратăп, хăçанта пулин хула "чухăн тăван" рольне манса каятех, республика влаçĕсенчен пулăшу ыйтса аллине тăсма пăрахатех. Çавăнпа та пĕрремĕш канашлăва эпĕ муниципалитетăн коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен: управляющи компанисен ертӳçисемпе ирттертĕм. Вĕсен умне энерги парса тăракансем умĕнче хальхи тӳлевсене вăхăтра татса пыма, вăрах вăхăт тăсăлакан йывăрлăхран тухмалли çулсем палăртма задача лартнă.

Хулан энерги парса тăракансем умĕнчи парăмĕ нумай çул хушши пухăнса пынă, çакă хăш-пĕр ертӳçĕсен ответсăрлăхне пула пулнă. Вĕсем, влаçа ларса, хула çыннисемшĕн мар, хăйсен ырлăхĕшĕн тăрăшнă. Çакăн пек позици тĕрĕс мар тесе шутлатăп. Паян 90-мĕш çулсем мар, эпир сирĕнпе право патшалăхĕнче пурăнатпăр. Влаçсен кашни ĕçĕ саккунпа килĕшсе тăмалла. Çавăнпа та Çĕмĕрле территорийĕнче саккунлăхпа йĕркелĕх туса хуратпăр тесе шантаратăп. Администраци корпусĕнче хăш-пĕр кадр улшăнăвĕсем пулаççĕ. Хулана профессионалсен команди ертсе пырĕ. Вĕсем тĕрĕсленĕ çынсем пулĕç, хулана та, унта пурăнакансене те шанăçлă пулĕç.

Хула администрацийĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ пĕрремĕш эрнере курнă ырă туйăмсем çинчен каласа парас килет. Эпĕ хулари шкулсен ĕçĕпе паллашрăм. Кăмăллă пултăм. Хулара вĕрентĕве çӳллĕ шайра йĕркеленĕ. Лайăх пуçарусене, эффективлă опыта çирĕпленме пулăшмалла, малалла аталантармалла.

**– Çĕмĕрле чăн та вĕрентӳ енĕпе республикăра малти вырăнсенче тăрать. Ку вăл пирĕн мăнах тата çав вăхăтрах ырату та – шкулта çирĕп пĕлӳ илнĕ тата сумлă аслă вĕренӳ заведенийĕсене кĕнĕ хысçăн пултаруллă çамрăксем тăван хулана таврăнма васкамаççĕ...**

– Эпир çынсене Çĕмĕрлере пурăнма кăмăллă пултăр тесе мĕн кирлине пурне те тăвăпăр. Тавралла пăхăр-ха – тĕлĕнмелле чаплă çут çанталăк: вăрмансем, юханшыв, таса сывлăш... Çакăн пек хитре пейзажпа Чăваш Енри кашни хула е ял мухтанма пултараймасть. Пире ăннă!

Мĕншĕн-ха Чăваш Енĕн чи хитре кĕтесĕ хăйĕн илĕртӳлĕхне çухатать? Мĕншĕн тесен çынсем хула аталанманнине кураççĕ: çурт-йĕр çук, ĕç çук, культурăпа кану центрĕсем çуктата ытти те. Кунта мĕн тума килмелле?

Хулана инвестицисем явăçтармалла, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем уçмалла, пурăнмалли çурт-йĕр тумалла. Хулана пурнăç вĕрсе кĕртмелле! Çĕмĕрле Федерацин монохуласене пулăшмалли программине кĕрĕ тесе питĕ шанатăп. Патшалăх пулăшăвĕ хулан экономикипе социаллă пурнăçне аталантармалли темиçе программăна пурнăça кĕртме пулăшĕ. Граждансене кивĕ тата авариллĕ çуртсенчен куçармалли, "Таса шыв" тата ытти программăсем малалла аталанĕç.

Манăн плансенче – çамрăксене ипотека илме май туса парассипе çыхăннă темиçе программăна пурнăça кĕртесси. Калаçусем пыраççĕ ĕнтĕ. Ахăртнех, вĕсем йывăç çуртсем пулĕç. Халиччен хăнăхнă пек мĕскĕн çуртсем мар, çыпăçтарнă пăрăсран тунисем хальхи çуртсем. Çавăн пекех Сăр хĕрринче кану бази тăвас килет.

Пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталантармалла. Çынсем Çĕмĕрлере хăйĕн ĕçне уçаççĕ пулсан влаçсем пулăшасса шанса тăмалла.

Тирпей-илем кӳрессине çирĕп шая лартма шутлатăп. Çакăнтан хула çыннисен кăмăлĕ кăна мар, вĕсем кунта пурăнас, ĕçлес тени те килет. Хула хитре тата таса пуласси вара коммуналлă службăсенчен кăна мар, хула çыннисенчен хăйсенчен те килет. Эпĕ çине тăнипе çитес çултан пуçласа хула бюджетĕнче территорисенчи обществăлла самоуправление аталантармашкăн укçа уйăрма тытăнаççĕ. Эпĕ çакна администрципе халăх эффективлă ĕçлеме кирлĕ элементсенчен пĕри тесе шутлатăп. Çынсем таса та хитре хулара пурăнма лайăхраххине ăнланса илмесĕр хула влаçĕсем пур пек проблемăсене татса пама пултараймаççĕ. Европăра кам та пулин пирус тĕпне урама пăрахтăр-ха – çынсем ăна тӳрех полицие тыттарса яраççĕ. Пирĕн вара, шел пулин те, çӳпĕлесси – йĕркеллĕ япала пек...

**– Андрей Юрьевич, сире провокациллĕ темиçе ыйту парам-ха. Эсир хальхи вăхăтра Мускавра пурăнакан ачăрсем Çĕмĕрлене суйласа илĕç тесе шутлатăр-и?**

– Пĕлетĕр-и, эсир пуррине хакламастăр. Хĕвел анăçĕнче çынсем мегаполиссенче мар, провинцири хуласенче пурăнма тăрăшаççĕ. Унта шăп, хĕвĕшӳ çук, юлашкинчен, унта сывлăш та тасарах... Çаксем пĕтĕмĕшле илсен этем пурнăçне тăсаççĕ.

Шансах тăратăп, тепĕр 15 çултан Çĕмĕрле хакра пулать. Ăнланатăп, уйрăм хулара рай тума çук, анчах хулана йĕркене кĕртесси – пурнăçа кĕме пултаракан япала. Çавăнпа та манăн ачасем Çĕмĕрлере пурăнма пултараççĕ тесе шутлатăп.

**– Эсир хула çинчен мĕн шутланине каларăр. Çынсем çинчен мĕн калама пултаратăр?**

– Хула çыннисем – лайăх çынсем. Кăмăллă, ĕçчен. Ку тахçанхи шухăшах, мĕншĕн тесен нумай çĕмĕрлесене тахçанах пĕлетĕп.

**– Сирĕн хальхи политика ĕненĕвĕсем мĕнлерех?**

– Хальхи вăхăтра "Единая Россия" – хăй çине мĕн пур решенисемшĕн ответлăх илекен пĕртен-пĕр парти. Хальхи вăхăтра эпĕ "Единая Россия" парти майлă.

"Ку япăх, çав япăх!" тесе кăшкăрнă чухне яланах çапла калас килет: "Эсĕ хăв тыт та лайăхрах ту!" Акă эпĕ Çĕмĕрле хулин администрацине килтĕм, хамăр хулана лайăхрах тăвас тетĕп!

**– Эсир Çĕмĕрлене тăтăшах "пирĕн хула" тетĕр. Эсир пирĕн пата чылайлăха тата шӳтлемесĕр килнĕ-и?**

– Эсир иккĕленетĕр-им? Çĕмĕрле – пирĕн тăван хула. Пирĕн ăна пĕрле упрамалла, сыхламалла, пуянлатса пымалла, Чăваш Енри тата Раççейри хуласем хушшинче тивĕçлĕ вырăн йышăнтăр тесе тăрăшмалла.

**М. ПОРФИРЬЕВА калаçнă.**

***Пирĕн справка***

**Андрей Юрьевич БРОНИЦЫН**

**ПĔЛӲ:**

- 1995 çулта Чăваш патшалăх университечĕн машиностроени факультетне пĕтернĕ.
- 2003 çулта патшалăх службин Атăл-Вятка академине "патшалăха тата муниципалитетсене тытса пырасси" специальноçпа пĕтернĕ
- 2007 çулта Раççей Федерацийĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Дипломати академине пĕтернĕ.

**ПРОФЕССИ ĔÇ-ХĔЛĔ:**

- 1993–1998 çç. – "Шупашкарти промышленноç тракторĕсен завочĕн" 2-мĕш поликлиникин санитарĕ;
- 1998 –2000 çç. –Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕн С.С. Семеновăн помощникĕ;
- 2000 – 2002 çç. – Шупашкарти 10-мĕш вăтам шкулти социаллă педагог;
- 2001–2002 çç. – Шупашкар хулин Депутатсен Пухăвĕн депутачĕ;
- 2002–2003 çç. – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн вырăнти самоуправлени ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ;
- 2003–2007 çç. – тăваттăмĕш суйлаври РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Патшалăх Думин вырăнти самоуправлени ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн членĕ;
- 2008–2009 çç. – "Раççей Федерацийĕн Оборона министерствин воспитанницисен пансионĕн" Мускаври кадетсен корпусĕн начальникĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ;
- 2010 ç. январьтен пуçласа 2010 ç. октябрьччен – "Бергер" компани директорĕн çумĕ;
- 2010 ç. ноябрьтен – Çĕмĕрле хула администрацийĕн пуçлăхĕ.

**НАГРАДĂСЕМ:**

- "Раççейре Патшалăх Думине туса хунăранпа 100 çул" асăну юбилей медалĕ;
- Космос çарĕсен командующийĕн палăру палли.

● Сывлăх

# Çĕмĕрлесен «пылак» чирĕ

Юлашки çулсенче пĕтĕм тĕнчере, уйрăмах аталаннă çĕршывсенче, эндокринолог патĕнче сахăр диабечĕ енĕпе тĕрĕсленекенсен шучĕ ӳссе пырать.

Çак чир çĕмĕрлесенчен те пăрăнса иртмерĕ. Чирлисен шутне палăртас тĕллевпе тата профилактика ĕçĕсене вăйлатас тесе республикăри эндокринологи диспансерĕн специалисчĕсемпе хула больници Çĕмĕрле хулинче сахăр диабетне вăхăтра тупса палăртас енĕпе проект туса хатĕрлерĕç. Çак проекта мĕнлерех пурнăçа кĕртни çинчен ноябрĕн 18-мĕшĕнче Чăваш Енĕн тĕп эндокринологĕ, доцент, медицина наукисен кандидачĕ Т.Н. Маркова каласа пачĕ.

Хулара сахăр диабечĕн профилактика кунĕсем иртнĕ. Çак вăхăтра сахăр диабетне тĕрĕслес текенсем пурте скрининг тума пултарнă, юнра сахăр шайĕ мĕн чухлĕ пулнине тĕрĕсленĕ. Çак кăтартусем тăрăх, сахăр диабечĕ Çĕмĕрлере мĕнлерех сарăлнин пĕтĕмĕшле ӳкерчĕкĕ йĕркеленнĕ. Палăртнă тăрăх, 1000 çын пуçне сахăр диабечĕ сарăлни Çĕмĕрле хулипе районĕнче чи пысăккисенчен пĕри – 25,2 процент. Анчах та эпидемиологи тĕпчевĕсем çакна кăтартаççĕ – чăннипе сахăр диабечĕ тупса палăртнинчен 2-3 хут ытларах сарăлнă. Сахăр диабечĕпе чирленĕ пĕр çын пуçне – чирлени çинчен пĕлмен 4-5 çын лекет.

Сахăр диабетне çине тăрса тупса палăртни – практикăллă сывлăх сыхлавĕн чи пĕлтерĕшлĕ задачисенчен пĕри. Кунта специалист-эндокринолог ĕçĕ-хĕлĕ те, сахăр диабечĕн шкулĕ ĕçлени те, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлани те кĕрет. Чăваш Енре «Чăваш Республикинче 2010-2020 çулсенче социаллă пĕлтерĕшлĕ чирсемпе кĕрешесси, вĕсенчен сыхланасси» республикăн тĕллевлĕ программине йышăннă. Унсăр пуçне «Сахăр диабечĕ» çумпрограмма ĕçлет. Вăл шăпах чире вăхăтра тупса палăртассипе çыхăннă.

Юлашкинчен хула больницин тĕп врачĕ М.В. Золин туса ирттернĕ ĕçе хак пачĕ, пĕрлехи проблемăсене асăнчĕ. Вĕсене татса памасăр практикăллă диабетологи малалла аталанма пултараймасть. Çавăн пекех вăл республикăри диспансерпа малалла çыхăнса ĕçлемелли çулсене палăртрĕ. Тĕпчев туса ирттернĕшĕн тата Чăваш Енĕн тĕп эндокринологĕ çĕмĕрлесемпе тачă ĕçленĕшĕн Т.Н. Марковăна администрацин тав çырăвне пачĕç.

**А. КАШИРИНА.**

# Сахăр контрольте

Сахăр диабечĕ чи анлă сарăлнă вăрах пыракан чирсенчен пĕри шутланать. Çак чирпе аптракансен шучĕ çулран çул ӳссе пырать. Хальхи вăхăтра Раççейре 2,7 млн. ытла çын сахăр чирĕпе асапланать. Çакă çынсен пурнăç йĕркипе çыхăннă: пысăк калориллĕ апат-çимĕç, сахал хускану туни. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне эндокринолог патĕнче Çĕмĕрле районĕнче пурăнакан 140 çын “сахăр диабечĕ” диагнозпа учетра тăрать. Чирлисене пурне те инсулинпа тата сахăра чакаракан таблеткăсемпе тивĕçтереççĕ, вĕсем сахăр диабечĕпе чирлекенсене самоконтроль меслечĕсене тата сывă пурнăç йĕркине вĕрентекен шкулта вĕренеççĕ.

**Сахăр даибечĕ – гипергликемипе палăрса тăракан метаболика чирĕсен ушкăнĕ. Вăл организм инсулин туса кăларасси, инсулин витĕм кӳресси пăсăлнин результачĕ пулса тăрать. Сахăр диабечĕ чухнехи вăрах тăсăлакан гипергликеми тĕрлĕрен органсем, уйрăмах куç, çу пӳри сиенленнипе, нервсем тата чĕрепе юн тымарĕсем йĕркеллĕ ĕçлеменнипе çыхăннă. Сахăр диабечĕпе 50 çула çитмен çынсен 1–2 проценчĕ тата 65 çултан аслăрах çынсен 10 проценчĕ ытла чирлет.**

Икĕ тĕрлĕ сахăр диабечĕ пулать. 1-мĕш йышши сахăр диабечĕ хырăмлăх айĕнчи парăн b клеткисем арканнипе çыхăннă, инсулин çителĕксĕрри патне илсе çитерет. 2-мĕш йышши диабет та инсулин резистентлăхĕпе тата вăл çителĕксĕр пулнипе çыхăннă. 2-мĕш тĕрлĕ диабетпа чирлисем ытларах чухне мăнтăрпа аптраççĕ, çавна пула инсулин резистентлăхĕ аталанать. 1-мĕш йышши диабет чухне чир хăвăрт аталанать. Унăн паллисем: час-часах шăрас килни, вăл шутра çĕрлехи вăхăтра та, шыв ĕçес килни, çăвар типсе тăни, апат лайăх ансан та, ӳт масси чакни, ӳт кĕçĕтни, ӳт тата лăймакаллă сийсем бактериллĕ тата кăмпаллă инфекцисене час парăнни. Çавăн пекех халсăрлăх, час ывăнни палăрать.

2-мĕш йышши сахăр диабетне нумай чухне ăнсăртран палăртаççĕ, мĕншĕн тесен чир вăрах аталанса пырать, гипергликемипе тата инсулин çителĕксĕр пулнипе çыхăннă симптомсем кая юлса палăраççĕ тата вĕсем сахăр диабечĕ кăткăсланнипе çыхăнса тăма пултараççĕ. Час-часах мăнтăр пулнине, атрери пусăмĕ пысăк пулнине, куç куçрасси чакнине, неврологи йĕркесĕрлĕхĕсене, ӳт кĕçĕтнине, урасем ыратнине палăртаççĕ.

Çакăн пек паллăсене асăрхасанах эндокринолог патне каймалла. Харпăр хăй тĕллĕн сипленме юрамасть. Тухтăр патне каяссине кая хăвармалла мар.

**Т. ТРОШКИНА,**
районăн тĕп больницин врач-эндокринологĕ.

# Тимĕр çынсем

**Çитĕннĕ çыннăн организмĕнче 4-5 г тимĕр пулмалла. Паян вара çак элемент нормăпа килĕшӳллĕ пулнине питех те сайра курма пулать. Уйрăмах хула çыннисен тимĕр концентрацийĕ пысăк. Çакă лайăх е япăх?**

Пурте тимĕр шайĕ сахал пулни япăх тесе калатчĕç. Юлашки вăхăтра çеç çак элемент ытлашши пулнинче ним лайăххи те çукки çинчен калама пуçларĕç. Кислорода куçарнисĕр пуçне тимĕр иммунитет системин ĕçне йĕркелесе тăрать, токсинсене организмран кăларса яма пулăшать, регенераци процесĕсене хутшăнать, ӳт-пĕве, çӳçпе чĕрнесен тытăмне лайăхлататать. Урăхла каласан, пирĕн клеткăсенчи чылай процессем тимĕр хутшăннипе пулса иртеççĕ. Анчах та вăл ытлашши пулсан тутăх йĕркеленнĕ евĕр реакцисем пулса иртеççĕ, тимĕр молекулисем кислородпа пĕрлешеççĕ, чĕрĕ сисене сиен кӳреççĕ.

Пирĕн кĕлеткери тимĕрĕн ытларах пайĕ гемоглобин шутне кĕрет, вăл вара кислород куçарнă çĕре хутшăнать. Шăпах çавăнпа çынна кислород çитмесен организм гемоглобин концентрацине ӳстернипе саплаштарать. Альпинистсен те сăртсем çинче çапла пулса иртет. Хулара пурăнакансен те – унта сывлăш газсемпе тулса çитнĕ.

Тимĕр нумай пулни ытларах арçынсен пулать. Юн физиологи уйрăмлăхĕсене пула улшăннăран çакă хĕрарăмсене сайра пырса тивет, анчах та менопауза хыççăн вĕсем те арçынсене хăваласа çитеççĕ. Тимĕр ытлашши пулни гепатитшăн характерлă паллăсемпе палăрать: ӳт, куç, çăвар маччипе чĕлхе сараласçĕ, кĕçĕттерме пуçлать, пĕвер ӳсет. Чĕре ритмĕ пăсăлать, çынсем шуранкаланса каяç-çĕ, çинçелеççĕ. Пулма пултарайман вырăнсенче пигментаци пулма пултарать – тĕс-лĕхрен, алă тупанĕсем çинче, хул айĕнче тата ытти вырăнсенче. Çапах та тĕрĕс диагноз лартас тесен юна биохими анализĕ тумалла.

Ытларах тимĕр пĕверте, чĕре мышцинче пухăнать, çакă органа хăйне те улăштарать – гепатит, пĕвер циррозĕ, сахăр диабечĕ аталанать, сыпăсем аптратма пуçлаççĕ, нерв системи пăсăлать, чĕре патологийĕсем палăраççĕ. Чĕре чарăнса ларма та пултарать. Тимĕр ытлашши пулсан Паркинсон тата Альцгеймер чирĕсем йывăррăн иртеççĕ, пыршăлăх, пĕвер, ӳпке рака кайма пултараççĕ. Ревматоидлă артрит та час-часах тимĕр нумай чухне аталанать.

Ытлашши гемоглобинлă çынсемпе тимлĕ пулмалла. Вĕсене аскорбин кислотине те пама юрамасть – вăл тимĕр организма кĕрессине вăйлатма пултарать-çке. Ытлашши тимĕрпе кĕрешесси унăн шайне ӳстерессинчен те йывăртарах. Чи лайăх мел – юн пани пулĕ (флеботоми). Вăл кирлĕ результатсем парать, медикаментсенчен те хăтарать. Чикĕлеш енче, тĕслĕхрен, 40-50 çултан иртнĕ çынсене донор пулма сĕнеççĕ. Çакă чĕрен ишеми чирне профилактика тума пулăшать.

Тимĕре тимлесе тăма тĕрĕс апатланни пулăшать. Какайри тимĕре, тĕслĕхрен, организм ӳсен-тăрантинчен вăйлăрах йышăнать тесе шутлаççĕ. Çакă пур чухне те çапла мар. Тĕслĕхрен, куллен сельдерей çисе тăрсан темиçе эрнере организмра çак элементăн балансĕ йĕркеленет. Ӳсентăранти тимĕр ăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсемпе пĕрлештерсен лайăхрах усă кӳрет. Тимĕрпе пуянланма С витаминпа В ушкăн витаминĕсем пулăшаççĕ. Çавăнпа та какайпа пан улмие анеми чухне çисен лайăх, гемоглобин пысăк чухне вара апла тума кирлĕ мар. Енчен те апат-çимĕçре кальципе сахăр сахал пулсан, тимĕр япăх сарăлать. Гемоглобин пĕчĕк пулсан шывпа пĕçернĕ (сĕтсĕр) хуратул лайăхрах.

**Rg.ru.**

*Норма гемоглобина, г/л*

| | От 0,5 до 2 лет | От 3 до 6 лет | От 7 до 12 лет | От 13 до 16 лет | От 17 до 19 лет | От 20 до 29 лет | От 30 до 59 лет | От 60 и старше |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Мужчины | 114-144 | 104-140 | 110-146 | 118-164 | 120-168 | 130-172 | 126-172 | 122-168 |
| Женщины | 106-148 | 102-142 | 112-146 | 112-152 | 112-148 | 110-152 | 112-150 | 112-155 |



● Районти археологи палăкĕсем

# «Хола çоч» хулаш

## («Городищенский мыс»)

***Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2005 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнчи 312-мĕш постановленийĕпе хулаш çĕрне кадастр хакне панă. 10 пин тăваткал метр çĕр лаптăкĕн хакĕ 13100 тенкĕ. Çĕмĕрле районĕн республика шайĕнче ятарласа сыхлакан археологи палăкĕ шутланать. 2007 çулта ăна упраса тăма Якуртушкăнь ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Çĕмĕрлери шалти ĕçсен пайне «Сыхлав обязательстви» панă.***

*(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 173-176-мĕш номерте).*

**– Манăн тата çакна та ыйтса пĕлес килет, Анатолий Никанорович. Ун чухнехи хĕрарăмсем мĕн ĕçпе пурăннă-ши?**

– Хĕрарăмсем, паллах ĕнтĕ, кил таврашĕнчи ĕçсемпе пурăннă, арçынсем сунартан тытса килнĕ чĕр чунсене тирпейленĕ. Хаклă йышши тирсене çемçетсе сутлăх хатĕрленĕ. Уйра тырă акса-туса илнĕ, ал арманĕпе вĕтетсе çăнăх тунă. Ача-пăча пăхасси те, апат-çимĕç пĕçересси те хĕрарăм çинех тиеннĕ. Çăм арлассипе тата пир тĕртессипе ытлах апалланман, çăм йăвалама, пир станĕ тума пĕлмен. Çип вĕçĕсене чул е тăм катăкĕсем çакса янă пулас. Хăш-пĕр хулашсенче вĕсене питĕ нумай тупаççĕ археологсем. Тир тасатмалли шăмă çĕçĕсем, тимĕр хачăсем те сахал мар.

Выльăх-чĕрлĕх те хĕрарăм аллинче пулнă. Вĕсем, лашапа ĕнесĕр пуçне, вăл вăхăтĕнче хир сыснине алла вĕрентнĕ, пирĕн эрăри 1-мĕш ĕмĕр тĕлне – кăвакалпа чăхсене те. Килте ун чухне мĕнле выльăх пулнине пĕлме тĕпчевçĕсем вĕсен шăммисене тупса тĕпченĕ. Ытларах чухне 18 проценчĕ – ĕнесем, 20 проценчĕ – лашасем, сыснасем – 48 процент, ытти выльăх-чĕрлĕх – 11 процент пулнă. Йытăпа кушак шăммисем те тĕл пулаççĕ. Пĕтĕм выльăх ун чухне аш-какая кайнă, лашасем те. Кĕтӳсем куçса çӳревлĕ пулман, мĕншĕн тесен сысна куçса çӳренине чăтаймасть. Вĕсене пысăк йытăсемпе пăхнă, ĕне сĕтпе çу панă. Çуне хальхи пекех çӳпçе евĕр хăвăлта тунă.

**– Арçынсем вара вăрçăпа сунарсăр пуçне мĕнле ĕçсем пурнăçланă?**

– Ратра арçын ача çуралсан, аслисем пĕчĕклех арçын ĕçĕсене вĕрентнĕ, ухă ăсталама, унран пеме, пулă тытмалли хатĕрсем çамрăклах тума пĕлнĕ. Лаша е вăкăр кӳлсе çĕр сухаланă. Хуçалăхра йывăр ĕçсене пĕтĕм ратпа пуçтарăнса тунă. Сунара та пĕччен çӳремен, çамрăксене илсе кайнă. Городец йышши палăксенче питĕ нумай тискер чĕр чун шăммине тупаççĕ: пăши, хир сысни, пăлан, хир качаки (косуля). Вĕсене аш-какайшăн тытнă. Унсăр пуçне хăнтăр, сăсар (куница), тилĕ, упа, ăтăр (выдра), юс (ласка) питĕ пысăк хакра пулнă. Вĕсен тирĕ укçа вырăнĕнче шутланнă, вĕсемпе темĕн те улăштарса илме пулнă. Унсăр пуçне кашни хулашрах пурнăç кăткăсланса пынăçемĕн тимĕр шăратасси вăй илет. Пирĕн хулашра та çав вăхăтра çунтарнă кăмрăксем тупнă. Вăрçă хатĕрĕсемсĕр пуçне ĕç хатĕрĕсем те кирлĕ пулнă-çке.





**– Анатолий Никанорович, ăçтан тупнă-ха вĕсем ун чухне шăратмалли тимĕр рудине?**

– Тимĕр руди вĕсем хăйсем пурăннă вырăнтах пур, çырма тĕпĕнче. Шурлăх руди – лимонит теççĕ ăна. Эсир çăл куçран шыв ĕçнĕ чух асăрханă пуль, хĕррисемпе вăл сарăхса ларать, хăш-пĕр чух тимĕр тути те калать. Çав рударан тăмран тунă кăмакасенче тимĕр шăратнă. Мĕнлерех процесс пулни çинче чарăнса тăмăпăр.

Унсăр пуçне авалхи çынсем хăйсен тумтирĕ çине çакса çӳремелли илемлĕ капăрсем тунă: çĕлесе хумалли тăхасем, тӳмесем, хăлха çаккисем, çĕрĕсем, каптăрма (çӳлкеме).

Кашни япаланах тĕшмĕшпе, асампа çыхăнтарса хатĕрленĕ. Хăш-пĕр капăрсем, ытларах хĕрарăмсем çинче, сыхçă (оберег) шутланнă. Ӳ керчĕксене çут çанталăк пулăмĕсене пăхăнса тунă. Спираль евĕрлĕ çаврашсем – хĕвел куçса пынине сăнарланă, е уйăх ӳссе пынине. Хĕвеле пуç çапакансем пулнă вĕсем. Чĕр чунсенчен ытларах лашапа пăши тĕл пулать. Кайăксенчен – кăвакал е унăн ури евĕрлĕ илемлĕ япаласем тĕл пулаççĕ. Ахальтен мар пулĕ кăвакала вĕсем виç тĕнчене кайма пултарать тесе шутланă, пĕлĕт çине вĕçме пултарать, çĕр çинче утса çӳрет, шыв тĕпне чăмать (леш тĕнчене – вилнисен тĕнчине кĕме пултарать).

Чăвашсен ахальтен мар пуль кăвакал гербсем çинче те пур, халапсемпе юмахсем те сахал мар. Авалхи халăхăн хăйĕн кульчĕ пулнă – Аслă хĕрарăм турри – хĕрарăм кĕлетки евĕр туса лартнă ăна. Вăл вăрман турри е шыв, уй, хӳтлĕхĕ, Анамĕш – (богиня плодородия е чадородия) тата ытти те.

**– Ăçта çухалнă-и вара çав çынсем?**

– Нимĕнле халăх та ахаль çухалмасть. Вĕсем е урăх культурăна, вĕсен чĕлхине илсе тепĕр çĕре куçса кайса урăх халăх пулса каяççĕ. Хăш-пĕр ăсчахсем каланă тăрăх, городец культури пирĕн эрăри виççĕмĕш ĕмĕрччĕнех пулнă. Теприсем 5-мĕш ĕмĕрччен, виççĕмĕшсем пирĕн эрăри 1-мĕш пинçуллăх пĕтиччченех – славянсемпе финн-угор йăхĕсем пулса кайиччченех пулнă теççĕ. Теприсем çак авалхи халăхран мордва (ирçесемпе çармăсем), мадъярсем пулса кайнă теççĕ. Тавлашмалли, тĕпчемелли нумай вĕсен. Çак таранччен ăсчахсемпе археологсем авалхи çак халăхăн хăйсен йăлипе çынна пытарнă пĕр çăвине те тупса палăртман.

**– Ку чăнах та вăрттăнлăх. Ăсчахсен мĕнлерех версисем пур ку тĕлĕшпе?**

– Пĕрисен çакăн пек тĕрĕслемен шухăш (гипотеза) пур. Вĕсем вилнĕ çыннисене, пура туса, ăна юпасем çине лартса пытарнă пулĕ теççĕ. Ман шухăшпа, унашкал меслетпе пытарсан та, çынсен шăммисем сыхланса юлмаллах.

Теприсем Индири йăла пек юпасем çине урай туса çунтарса янă, теççĕ. Пĕлсе пĕт-ха вĕсене, çĕр çын – çĕр шухăш.

**Л.САЕРОВА**
калаçнă.

# ÇАНТАЛĂК ПРОГНОЗĔ

| | • Шăматкун | • Вырсарникун | • Тунтикун | • Ытларикун | • Юнкун | • Кĕçнерникун | • Эрнекун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|

**НОЯБРЬ-ДЕКАБРЬ**

www.pogoda.chuvashia.com даннăйĕсем тăрăх

| | 27 | 28 | 29 | 30 | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | ăмăр | пĕлĕтлĕ | юр çума пултарать | юр çăвать | юр çума пултарать | юр çума пултарать | пĕлĕтлĕ |
| К. | -7...-3 | -8...-4 | -9...-5 | -10...-6 | -7...-3 | -7...-9 | -10...-12 |
| Ç. | -9...-5 | -9...-5 | -15...-11 | -5...-1 | -13...-9 | -10...-12 | -15...-17 |

# САЛАМЛАТПАР!

**Дорогую, любимую жену, маму, бабушку, сноху КИРИНУ Валентину Петровну С ЮБИЛЕЕМ!**



*Пусть будет в жизни каждая минута*
*Неповторимой, красочной и яркой.*
*Дом радует комфортом и уютом,*
*И ждут судьбы желанные подарки:*
*Успех, достатоки мечты свершенье*
*И близких пониманье и участье!*
*Пусть мир царит в душе, а в отношениях –*
*Сердечность, теплота, добро и счастье!*

**Муж, дети, внуки Ванюша, Олежка, Вовочка, свёкр, свекровь.**

**Дорогую и любимую жену, маму и бабушку КИСЛЯКОВУ Татьяну Александровну С ЮБИЛЕЕМ!**



*У тебя сегодня день рождения,*
*Это самый радостных из дней.*
*Пусть вот это наше поздравление*
*Тоже будет радостью твоей.*
*Мы тебе желаем только счастья,*
*А в жизни долгих, долгих лет.*
*Пусть не будет у тебя ненастья,*
*Только радость, только свет.*

**Родители, муж, дети, внуки, снохи.**

**Дорогую, любимую жену, мамочку, бабушку, тещу МАКАРОВУ Галину Владимировну С 50-ЛЕТИЕМ!**



*Суть поздравления проста -*
*Прожить тебе ещё полста.*
*В приятном окружении,*
*В любви и уважении.*
*С годами мы приобретаем*
*И седину, и знаний свет.*
*От всей души тебе желаем*
*Здоровья, счастья, долгих лет.*
*И с каждым годом быть милее,*
*Пусть счастье наполняет дом.*
*И со столетним юбилеем*
*Еще поздравить мы придём.*

**Муж, дети Оля и Таня, внучка Яночка, внук Сашенька, зять Женя.**

**Дорогого и любимого сына, брата, шурина МАСКИНА Сергея Михайловича С ЮБИЛЕЕМ!**



*Кипит работа повседневно,*
*Но вот среди обычных дней*
*Вдруг наступает день рожденья,*
*Чудесный праздник – юбилей!*
*Желаем счастья, светлых дней.*
*Здоровья, что всего ценней,*
*Дороги жизни подлинней*
*И много радости на ней.*

**Мама, папа, семьи Антоновых, Ефимовых.**

**От всей души дорогую маму, бабушку, прабабушку ЗОЛОГИНУ Екатерину Андреевну (д. Савадеркино) с ДНЕМ РОЖДЕНИЯ!**



Желаем крепкого здоровья, счастья, долголетия.

*Не унывай, что годы пролетают,*
*Нам поучиться бодрости твоей.*
*И пусть тебя всё время согревают*
*Внучат вниманье и тепло детей.*

**Сыновья, дочь, снохи, зять, внуки, правнуки.**

## Дачăсене тимлĕхсĕр ан хăварăр

01 СЛУЖБА

**Ноябрĕн 24-мĕшĕ тĕлне Çĕмĕрле хулипе Çĕмĕрле районĕн территорийĕнче 76 пушар пулнă, иртнĕ çулхи çак тапхăрта – 74. Çак тапхăрта хулара 37 пушар тухнă, районта – 39. Çулăмра 9 çын пурнăçĕ татăлнă (пĕлтĕр – 6), 3 çын сусăрланнă.**

Пушарсене ăçта пулни тăрăх тишкерсен, ӳкерчĕк çакăн пек: 21 пушар – пурăнмалли çуртсенче, 28 – хуралтăсенче, 8 – нумай хваттерлĕ çуртсенче, 3 – сад участокĕсенче, 2 – автотранспорт çинче, 14 – ытти вырăнсенче. Ытларах чухне пушар сăлтавĕ электрооборудовани вырнаçтарнă тата усă курнă чухне пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пурнăçламанни (14), хутса ăшăтмалли кăмакасем юсавсăр пулни (10) тата çулăмпа асăрханусăр пулни (39) пулса тăрать.

Пушарсем ытларах Мăн Улхаш (6, пĕлтĕр – 4), Турхан (9, пĕлтĕр – 5), Çĕмĕрле (2, пĕлтĕр – 0) ял тăрăхĕсен территорийĕсенче пулнă.

Тĕслĕхрен, ноябрĕн 7-мĕшĕнче 19 сех. 27 минутра Мăн Улхашри Чапаев урамĕнчи 26-мĕш çуртра пушар тухнă. Çулăм çурта тата хуралтăсене тĕп тунă. Хуçисем çуртпа дача вырăнне усă курнă, унта никам та тăтăшах пурăнман.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче 21 сех. 23 минутра Мисчĕ поселокĕнчи Шевченко урамĕнчи 14-мĕш çурт çунма пуçланă. Вут-çулăм çуртпа сарайне тĕп тунă.

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче 2 сех. 39 минутра Мисчĕ поселокĕнчи Пионер урамĕнчи 1-мĕш çурта çулăм çавăрса илнĕ. Пушар çуртпа хуралтăсене тĕп тунă. Ку çуртра та никам та пурăнман, унпа дача вырăнне усă курнă.

Çĕмĕрле районĕнчи ялсенче дача вырăнне усă куракан çуртсен хуçисем! Патшалăх пушар надзорĕн пайĕ сире харпăр хăйĕн пурлăхĕн тăрăмне тата вăл мĕнле упраннине тăтăшах контроллесе тămалли пирки тепĕр хут асăрхаттарать.

**А. САБАНЦЕВ,**
патшалăх пушар надзорĕн Çĕмĕрле хулипе Çĕмĕрле районĕнчи пайĕн начальникĕн çумĕ.

### СĂРĂ ВЫРĂННЕ ЦИНК

Çын тĕрĕс мар апатланнипе çӳç ир шуралма пултарать. Тĕслĕхрен, организма цинк çитменнипе. Цинкпа тинĕс продукчĕсем, банан, кавăн тĕшши пуян.

### ОЛИВА ÇĂВĔ

Олива çăвĕ илемпе сывлăхшăн çеç мар, кĕлеткешĕн те усăллă. Унри олеин йӳçекĕ хырăмра апат ирĕлнĕ май аппетита чакаракан гармона çаврăнать. Пĕчĕк порципех тăраннăн туйма кунне 1-2 апат кашăкĕ олива çăвне салата хушса çини те çитет.

## *Пĕлме интереслĕ*

### 17-ри ПЕПКЕ

Америкăра çулталăк çурăри ача пек курăнакан 17 çулти хĕр ача пурăнать. Вăл пулăшнипе ученăйсем ĕмĕр çамрăклăхăн вăрттăнлăхне тупасшăн. Хĕр ача 17 çулта пулин те унăн йывăрăшĕ 7 килограма яхăн, çӳллĕшĕ 76,2 сантиметр, ăс-тăнĕ те çулталăкри ачанни пек кăна. Унăн ДНКине тĕпченĕ хыççăн ученăйсем хĕр ача ватăлманни генсем сиенленнинчен килет тесе ĕнентереççĕ.






Комиссия по проведению торгов (аукционов, конкурсов) по продаже имущества, находящегося в муниципальной собственности города Шумерли, сообщает, что победителем аукциона по продаже мотоцикла ММВЗ-3.112.12, состоявшегося 2 ноября 2010 года, стал Тарлыков Евгений Михайлович. Цена продажи – 2760 рублей.

**“Малалла” хаçата**

**редакцире альтернативлă майпа çырăнма май пур. Ăна кирек хăш ĕç кунĕнче те 8.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен çырăнма пулать.**

**Подпискăна йĕркелесенех хаçата илме пултаратăр.**


ГУП ЧР «Шумерлинский издательский дом»

МАЛАЛЛА

ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА

Директор-гл. редактор В.М. ХОХЛОВА.

Зам. главного редактора Н.П. ЧЕРНОВ.

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, Государственное унитарное предприятие ЧР “Шумерлинский издательский дом”.

Газета зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ФС 18-2363 от 29.08.2005 г.



НАШ АДРЕС:
429120, г.Шумерля,
ул. Косточкина, 5.
E-mail: gazeta@cbx.ru
vpered7@mail.ru

ТЕЛЕФОНЫ:
Гл. редактор - 5-12-20, 5-42-19 (факс);
Зам. главного редактора, информационно-аналитический отдел, прием рекламы и объявлений - 5-02-52. Обозреватели по вопросам социально-экономического развития города и района - 5-43-14
Отдел компьютерной верстки - 5-05-95
Бухгалтерия - 5-03-53



Газета выходит по пятницам (на русском и чувашском языках).

Рукописи не рецензируются и не возвращаются. Авторы опубликованных материалов несут ответственность за точность приведенных фактов, цитат и прочих сведений. Точка зрения редакции не обязательно совпадает с мнением авторов.

Материалы на правах рекламы публикуются под знаком (P)

За содержание рекламных объявлений редакция ответственности не несет.

Реклама, объявления, поздравления, соболезнования, благодарности публикуются только с предоплатой.

НАШИ БАНКОВСКИЕ РЕКВИЗИТЫ:
ИНН 2125004131
ОГРН 1022103028771
КПП 212501001
БИК 049700716
№ расч. сч. 40602810300000000062
№ корсч. 30101810000000000716
ГУП ЧР “Шумерлинский издательский дом”.

Объем 1 п.л.
Печать офсетная
Индекс 31001.
Тираж 5934, в т.ч. на чувашском языке 299 экз.
Заказ № 1878.
Газета сверстана в редакции. Время подписания газеты в печать по графику 17 часов.
Номер подписан в 17 часов.

Выпуск газеты осуществлен при финансовой поддержке Агентства по печати и массовым коммуникациям РФ.

Дежурный по номеру Н.П. ЧЕРНОВ.

Отпечатано в ГУП ЧР “Шумерлинский издательский дом”: г.Шумерля, ул. Косточкина, 5